*Алран кайми аки-сухи, асран кайми атти-анни...*

ХЫПАР

# ХРЕСЧЕН САССИ

ЭРНЕ КУН

11 (2423) №
Хакĕ ирĕклĕ
1991 çулхи ака уйăхĕн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă

2014, нарăс, 14

КАНУ КУНĔН КĂЛАРĂМĔ

ЧĂВАШ ЕН  ЯЛ-ЙЫШ  КИЛ  ХŸТЛĔХ  СЫВЛĂХ  ТĔПЕЛ

ШУХĂШ

## Картише кĕрсен мĕн сас лайăх?

Паллах, выльăх-чĕрлĕх сасси. Ĕне тытсан, сысна усрасан, хур-кăвакалпа чăхчĕп ĕрчетсен сĕтел те яланах тулли, ытлашшине сутса укçа-тенкĕ те тума пулать. Ĕне усраканăн тути çуллă тесе ахальтен каламан ĕнтĕ ватăсем.

Район центрĕнчен чи аякра вырнаçнă ялсенчен пĕринче – çирĕм киллĕ Канаш паççулккинче – Шăмăршă ялĕнчи чухлĕ выльăх-чĕрлĕх усраççĕ тенине ĕненетĕр-и? Хам та малтанах шанасшăн марччĕ, анчах кайса курсан, чăваш каланă пек "тытса пăхсан" чăн сăмахăн суйи çуккине куçпа пăхса ĕнентĕм.

Канашра килĕрен икĕ е виçĕ ĕне усрани – тĕлĕнмелле япала мар. Акă Владимирпа Надежда Макаровсем çак выльăха тăватă чун таран тытаççĕ. Ĕнесемсĕр пуçне темиçе пуç сысна та усраççĕ, çăва тухсан кăвакал чĕпписем туянса çитĕнтереççĕ, чăхсен шучĕ те икĕ теçеткерен иртет.

– Макаровсем – чăн-чăн хресченсем, – чунтан ырларĕ çак ĕçчен çемьене паççулккара пурăнакан тăванăм В.Викторов. – Гусеницăллă тата кустăрмаллă тракторĕсем пĕрре те ахаль тăмаççĕ, хамăр паççулккăра пурăнакансене çеç мар, кўршĕ ялсене те пулăшаççĕ. Вĕсен кăкарса ĕçлемелли техника та çителĕклĕ, Володя ял хуçалăх машинисене хăех юсаса тăрать.

Макаровсем ял демографине лайăхлатма та хастар хутшăнаççĕ – çулталăк çурă каялла кăна-ха çемьене "пĕчĕк кайăксем" – ытарма çук чипер йĕкĕреш хĕр ачасем килнĕ. Автомашина туянни те çемье тулăх та тату пурнăçпа пурăннине çирĕплетет.

Макаровсемсĕр пуçне те пĕчĕк ялта хастар çынсем сахал мар. Акă В.Емельянов, П.Егоров, Р.Викторова тата ыттисем выльăх-чĕрлĕх йышлă усраççĕ. Ман тăванăм Владимир Иванович Викторов та – икĕ ĕне хуçи. Ытлашши сĕте предпринимателе сутаççĕ, çак майпа уйăхне 3-4 пин тенкĕ укçа тăваççĕ.

Выльăх апачĕ пирки пăшăрханмалли çук: çу кунĕсенче алла çава тытсан ытлă-çитлĕ утă хатĕрлеме пулать. Хирте уйăрса панă çĕр пайĕсенче пĕр çул ўсекен курăк тата выльăх кăшманĕ çитĕнтереççĕ.

Ўркенмен çынсене чун-чĕререн мухтас килет. Канаш паççулкки çĕнелсе-илемленсе пыни, ачасем çурални ял малашлăхĕ пуррине çирĕплетет.

Шел те, районти кашни ял пиркиех хăпартланса калама çук. Пушă выртакан, çум курăкĕ ашкăрса ўсекен пахчасене куратăн та, чĕре ыратать. Ваттисем каланă тăрăх – вăрçă кĕрленĕ çулсенче те çĕре акмасăр хăварман вĕт-ха, вăйсăр лашапа е văкăрпа сухаласах çĕр ĕçне тунă. Мĕн пулчĕ сана, ял-йышăм? Унччен ирсерен виçĕ-тăватă кĕтў хăвалакан ялта халĕ пĕр кĕтўлĕх те ĕне выльăх пуçтарăнмасть. Сĕт хакĕ чылай ўссен те ĕне усракансен йышĕ нумайланчĕ теме çук.

2-мĕш стр. ➔

## Пахчаçăсен 2014 çулхи уйăх-хĕвел календарĕ

### Календарьте вăрлăх акмалли тата калча лартмалли чи лайăх кунсене кăтартнă

| Культура | Нарăс | Пуш | Ака | Çу | Çĕртме | Утă | Çурла | Авăн | Юпа |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Çĕр çийĕнче пулакан пахча çимĕçне акмалли кунсем | 8, 9, 13 | 3-4, 7-9, 12-13 | 3-5, 8-9 | 1-2, 6, 30 | 2-3, 10-12, 29-30 | 7-10 | 4-6, 31 | 1-3, 6-7, 27-30 | 3-4, 7, 26-27, 31 |
| Çĕр ăшĕнче ўсекенсене акмалли кунсем | 21-23, 27 | 20-23, 26-27 | 16-17, 22-23, 26-27 | 15-16, 23-25 | 16-17, 19-21, 24-25 | 13-14, 17-18, 21-23 | 13-15, 17-19, 23 | 10-11, 14-16, 19-20 | 11-13, 16-17 |
| Сухан тымарлă чечек | 23, 26-27 | 21-23, 25-27 | 16-19, 20-24, 26-27 | 15-20, 24-25 | 15-17, 21, 24-25 | 13-14, 18, 22-23 | 13-14, 18, 23 | 11, 15-16, 20 | 11-17, 21-22 |
| Вăрăпа акакан чечек | 8, 9, 13 | 3-4, 7-9, 12-13 | 3-9, 13-14 | 1-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 7-12, 29-30 | 6-10, 31 | 4-6, 28-31 | 1-4, 6 28-29 | 3-4, 27,31 |
| Кабачок, патиссон, кавăн | 8-9, 11-13 | 3-4, 7-13 | 3-9, 13-14 | 1-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 8-11, 30 | 8-9, 31 | 5-6, 30-31 | 2-3, 6-7, 27-30 | 4, 26-27 |
| Тутлă кăшман (брюква), çарăк | - | 20-22, 26-27 | 16-23, 27 | 15-19, 23-25 | 16, 19-20, 24 | 14, 18 22-23 | 14-15, 18-19, 23 | 11, 15-16, 20 | 16-17 |
| Пăрçа, фасоль нимĕç пăрçи | 8, 12-13 | 3-4, 7-8, 11-13 | 3-8, 13 | 1-5, 10-12, 30 | 1-2, 7-8, 10-11, 29 | 7-10 | 4-6 | 1-3, 6-7, 27-29 | - |
| Хурăн çырли (клубника), ревень | 8-9, 13 | 3-4, 7-12 | 4-8, 14 | 1-4, 6, 12-13, 30-31 | 3, 12, 29-30 | 7-9 | 5-6, 28-31 | 2-3, 7, 27 | 3-4, 26-28 |
| Купăста, спаржа | 8, 9, 13 | 3-4, 7-13 | 3-9,13-14 | 1-6, 11-13, 30 | 2-3, 10, 29 | 8-10 | 5-6 | 1-2, 28-29 | - |
| Çĕр улми, топинамбур | 12-13 | 3, 10-12 | 8-9, 14 | 1-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 8-12, 30 | 7-9 | - | - | - |
| Çулçăлăх сухан | 8, 9, 13 | 3-4, 7-9, 12-13 | 3-6, 8-9, 13-14 | 1-2, 6, 30 | 2-3, 11, 30 | 8-9 | 5-6, 31 | 2-3, 7, 29-30 | 3-4, 26-27 |
| Пуçлă сухан | 23, 27 | 20-23, 26-27 | 16-23, 26-27 | 15-20, 23-25 | 16, 19-20 | 13, 17, 21-22 | - | - | - |
| Кишĕр, тымарлăх пастернак | 27 | 20-22, 27 | 16-19, 23, 26-27 | 15-16, 23-25 | 16-17 | - | - | - | - |
| Хăяр, арпус, дыня, куккурус | 8, 9 | 3-4, 7-13 | 3-6, 8-9, 13-14 | 1-6, 11-13, 30 | 2-3, 10-11 | 7-10 | 4-6, 31 | 2-3, 6-7, 27-28 | 7, 26-27 |
| Тутлă пăрăç, баклажан | 8-13 | 3-4, 7-13 | 3-5, 8-9 | 1-2, 6, 30 | 2-3, 10-12 | 7-10, 31 | 5-6, 31 | 2-3, 6-7, 27-29 | 3-4, 26-27 |
| Йўçĕ пăрăç | 8, 9, 24-26 | 3-4, 7-9, 24-25 | 3-5, 8-9, 20-21 | 1-2, 6, 17-18, 30 | 2-3, 10-12, 14-15 | 7-11, 31 | 7-9, 31 | 2-5, 27-29 | 1-4, 27-31 |
| Çулçăлăх петрушка | - | 7-8, 12-13 | 3-8, 14 | 1-2, 5-6, 12-13, 30-31 | 1-3, 7-9, 10-12, 29 | - | 4-6, 30 | 2-3, 6-7, 29-30 | 3-4, 7, 26-27, 31 |
| Тымарлăх петрушка | 21-23, 27 | 17-23, 26-27 | 16-23, 26-27 | 15-18, 23-25 | 15-17, 24-25 | - | 13-15, 17-19, 23 | - | - |
| Хĕвел çаврăнăш | 11-12 | 12-13 | 3-5, 8-9, 13-14 | 1-2, 6, 11-13, 30 | 2-3, 10-12, 29 | - | - | - | - |
| Редис, йўç кăшман, дайкон | 22-23, 26-27 | 20-23, 26-27 | 16-22, 26-27 | 15-20, 23-25 | 16-17, 19-21, 24-25 | 17-18, 21-24 | 13-15, 17-21, 23 | 10-11, 14-16, 19-20 | 11-13, 16-17 |
| Салат, шпинат | 8, 9 | 3-4, 7-9, 12-13 | 3-9, 14 | 1-4, 6, 10-12, 30-31 | 1-3, 7-12, 29-30 | 6-11, 31 | 2-6, 8-9, 28-31 | 1-3, 7, 29-30 | 3-4, 7, 31 |
| Кăшман | 21-22, 27 | 21-23, 27 | 16-22, 26-27 | 15-19, 23-25 | 16-17 | 17-18, 23 | - | - | - |
| Тымарлăх сельдерей | 21-23, 27 | 18-24, 26-27 | 16-23, 26-27 | 15-19, 23-25 | 15-17, 19-29, 25 | 13-14, 17-18, 21-25 | - | - | - |
| Помидор | 8-13 | 3-4, 7-13 | 3-9, 13-14 | 1-2, 3-6, 10-13, 30-31 | 1-3, 7-12, 29-30 | 7-10, 31 | 4-6, 31 | 1-3, 6-7, 27-30 | 3-4, 7, 26-28, 31 |
| Укроп, фенхель, кинза, тмин, горчица | 8, 9, 13 | 3-4, 7-10, 12-13 | 3-9, 13-14 | 1-6, 10-12, 30-31 | 1-3, 8-12, 29-30 | 7-10 | 4-6, 31 | 1-3, 6-7, 27-30 | 3-4, 7, 26, 31 |
| Хĕрен | 21-23 | 20-23 | 17-19, 21-23, 27 | 15-19, 24-25 | 17, 20-21, 25 | 14, 18, 22-23 | 13-15, 17-19, 23 | 10-11, 15-16, 19-20 | 11-14, 17 |
| Ыхра | 21-22 | 19-22, 25-27 | 16-19, 21-23, 26-27 | 15, 23-24 | 16, 19-21 | 13, 17, 21-22 | 13-14, 17-18, 22-23 | 10-11, 14-17, 19-20 | 11-17, 21-22 |
| **Ўсен-тăран акма, куçарса лартма юраман кунсем** | | | | | | | | | |
| | - | 1-2, 29-31 | 28-30 | 27-29 | 26-28 | 26-28 | 24-26 | 23-25 | 23-25 |
| **2014 çулта тулли уйăх** | 15 | 16 | 15 | 14 | 13 | 12 | 10 | 9 | 8 |

ХŬТЛĔХ ЧĂВАШ ЕН ЯЛ-ЙЫШ КИЛ СЫВЛĂХ ТĔПЕЛ

# Картише кĕрсен мĕн сас лайăх?

1-мĕш стр.

Хамăр вара, района пысăк пуçлăх килсен, "ĕç çук, укçа тума май çук" тесе мĕскĕнленетпĕр. Хамăршăн хамăр тăрăшмасан пире кам ырлăх-пурлăх туса парĕ? Патшалăх хыснин ахаль те çĕр те пĕр шăтăк, хăшне малтан сапламаллине те пĕлме çук.

Картише кĕрсен мĕн сас лайăх? Шел, нумай килте кушак çуйхашнисĕр пуçне урăх ним сасă та илтейместĕн. Е эрех-сăмакун ĕçсе сĕрĕмленнĕ кил хуçи хутлă-хутлă намăс сăмахпа ахăрашни хăлхана пырса кĕрет. "Ĕç çук та – ĕçетĕп", – тўрре кăларасшăн вăл хăй мĕншĕн черкке енне туртăннине....

Ял хуçалăхне аталантарасси пирĕн экономика политикин тĕп çул-йĕрĕсенчен пĕри шутланать. Чăваш Республики ĕçе пуçăнакан фермерсене тата çемье фермисене пулăшу парас енĕпе йышăннă программăсене пурнăçлама хастаррăн хутшăнни пĕчĕк калăпăшлă хуçалăхсене аталантарма хавхалантармалли хушма сăлтав пулса тăчĕ.

Ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсен килти хушма хуçалăхсенчен хресчен (фермер) хуçалăхĕсем йĕркелес ĕçре пур енĕпе те пулăшса пырасчĕ.

**Иван САЛАНДАЕВ.**

## ШУТА ИЛМЕ

### Вăрлăх акиччен

◆ Çĕнĕ тата тулли уйăх хыççăн виçĕ кун иртмесĕр те вăрлăх акмаççĕ. Çĕр çийĕнче пулакан пахча çимĕçне тулакан уйăхпа акаççĕ-лартаççĕ, çĕр ăшĕнче пулаканнине (тымар çимĕçлине) – катăлакан уйăхпа.

◆ Вăрлăх акнă вăхăтра никам умĕнче те парăма кĕмелле мар.

◆ Хăвăр акнă-лартнă хыççăн вăрлăхпа калчана ыттисене те парăр.

◆ Вăрлăх акнă вăхăтра кўршĕ куç илмесĕр пăхса тăрасран сыхланăр.

◆ Калчана куçарса лартнă чухне алла сысна салипе сăтăрсан ўсен-тăрана хурткăпшанкă тапăнмасть теççĕ.

◆ Пирвайхи калчана лартас умĕн пуçа алăпа тытма сĕнеççĕ, çапла тусан çимĕç те пуç пекех çаврака та пысăк пулать имĕш.

◆ Хĕлле юр йăран евĕр йĕрлĕ-йĕрлĕ выртсан вăрлăха сайра акмалла, пĕр тикĕс пулсан – çăрарах.

◆ Хĕлле йывăççене час-часах пас тытсан – тухăç лайăх пулĕ.

◆ Юр кĕрчĕсем пĕчĕк пулни – тĕш тырă япăх пуласса.



**ПАЯН кун тăршшĕ 9 сехет те 33 минут. Уйăх тулса пырать.**

**Шăшисене хăвалакан Трифон кунĕ. Çак кун хресчен тыр-пула шăши юрăхсăра кăларасран тухатнă. Шăши тыттăр тесе кушака уйрăмах лайăх пăхнă. Каçча кайман хĕрсем часрах савни тупма ĕмĕтленнĕ. Трифон кунĕ мĕнле – нарăсри ытти кунсем те çаплах пулĕç тенĕ.**

**ЫРАН – хĕлпе çу тавлашнă кун. Çак кун кĕрĕкпе сăхман тĕл пулаççĕ-мĕн. Сретени кунĕ мĕнле – çур та çаплах. Сретени каçĕ çăлтăрлă пулни – çур кая юлса килессе. Вăрăм çула тухма хушман.**

**ВИÇМИНЕ – тин суралнă ачасене сыхлакан Çеменпе Анна кунĕ. Тĕнчене килнĕ чун сывлăхлă пултăр тесе кĕлĕ тунă.**

## КĔСКЕН

**Çулталăк пуçланнăранпа республикăра 117 пушар тухнă, 19 çын пурнăçĕ татăлнă.**

**Иртнĕ çул Шупашкарти Президент перинаталь центрĕнче 3989 ача çуралнă, 2012 çулхинчен 578 пепке ытларах. 1000 грамран çăмăлрах çуралнă ачасене пĕлтĕр ытларах сипленĕ. Иртнĕ çул ача çуратакан хĕрарăм вилни пулман.**

**Пĕлтĕр Чăваш Енре пурăнакан 231430 çын диспансеризаци витĕр тухнă. 68,3 проценчĕн (155017 çын) вăраха кайнă чир тупăннă, ытларахăшĕ йĕркеллĕ çисе пурăнманнипе (70 процент) чирленĕ, теприсем – холестеринпа çу çаврăнăшĕ пăсăлнипе (38), хускану туманнипе (26), юн пусăмĕ ўснипе (26), самăррипе (14), табак туртнипе (13), эрех ĕçнипе (7 процент).**

## ЫЙТУ-ХУРАВ

### Пўрере – киста, пĕверте – юн мăкăлĕ

**? Манăн пўрере киста, пĕверте гемангиома ўссе ларнă. Çавсене мĕнле пĕтермелле-ши?**

**Лидия БЕЛОВА. Куславкка районĕ. Пăрмас ялĕ.**

Киста тĕрлĕрен пулать. Кашнине хăйне май сиплеççĕ. Хăшне-пĕрне операци мелĕпе кăна.

Пўрери кистаран сипленмелли анлă сарăлнă рецептсене пичетлетпĕр.

**1** Ăвăс хуппине аш арманĕпе авăртмалла, ăна кунне 3 хут, апат умĕн, çуршар кашăк çимелле, шывпа сыпса ямалла. Икĕ эрне сипленнĕ хыççăн пĕр эрне тăхтамалла.

**2** Кĕленчене ылтăн мăйăх (золотой ус) текен курăкăн 50 сыппине тата çур литр шур эрех ярса вунă кун тытмалла, сăрăхтармалла. Ирсерен – выç варла, каçпа апатланиччен çур сехет маларах çак схемăпа ĕçмелле: пĕрремĕш кунне – 30 мл шыва 10 тумлам хушса, иккĕмĕш кунне – 11 тумлам, çапла 25 кунччен пĕрер тумлам ўстерсе пырса 35 тумлама çитермелле. Кайран пĕрер тумлам чакарса пырса 10 тумлам хăвармалла.

**3** Вĕретсе сивĕтнĕ 1 л шыва аш арманĕ витĕр кăларнă 1 кг ыхра ямалла. 1 уйăх тăрăлтарса лартмалла, сăрăхтармалла. Кунне 3 хут, çур стакан ăшă сĕтпе 2-шер кашăк ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – 10-15 кун. Çак мелпе кашни виçĕ уйăхран сипленмелле.

**4** Çĕр улмине çутăра вырттарса шăтармалла. Çур литр кĕленчене 2/3 пайĕ таран çĕр улмин симĕс калчипе тултармалла, туличчен шур эрех ямалла. 3 эрне тĕттĕм вырăнта тытмалла. Ăна кашни ир, выç варла 50 г шыва 1 тумлам ўстерсе ĕçмелле, кунсерен пĕрер тумлам хушса пымалла. 30 тумлама çитсен – чакарса пымалла. 2 уйăх сипленсен пĕр эрне тăхтамалла. Унтан каллех çĕнĕрен пуçламалла: хальхинче 1 тумламран 40 тумлама çитермелле, кайран чакарса пымалла. 80 кун сиплексен 1 эрне канмалла. Çакăн хыççăн 1 тумламран 50 тумлама çитермелле, унтан чакарса пымалла.

**5** Палан сĕткенĕпе пыл (1:1) хутăштармалла. Пĕрремĕш эрнере çак хутăша ирсерен чей кашăкĕн чĕрĕкĕ чухлĕ ĕçмелле, иккĕмĕш эрнере – çур чей кашăкĕ, виççĕмĕш эрнере – пĕрер кашăк, анчах ку хутĕнче ирпе те, каçпа та.

**Гемангиома** – юн тымарĕсен сиенсĕр мăкăлĕ. Пысăкăшĕ 5 см çитмесен, малалла ўсмесен унран хăрама кирлĕ мар, теççĕ тухтăрсем. Çакнашкал нушапа тĕл пулнисем тал писен (расторопша) вăррипе сипленни паллă. Вăрра çăнăх евĕр туса кунсерен 3 хут, апат вăхăтĕнче, 1-ер чей кашăкĕ чухлĕ çиеççĕ.

Сĕлĕ шывĕ пулăшма пултарать: лайăх çуса тасатнă 1 стакан сĕлле 1 литр шыва ярса 10 сехете яхăн тăрăлтарса лартмалла, унтан йăваш çулăм çинче çур сехет вĕретмелле, 12 сехет тăрăлтарса лартмалла. Сăрăхтармалла. Кунне 3 хут, апат умĕн, çуршар стакан ĕçмелле. Сиплев тапхăрĕ – 1,5 уйăх. Пĕр уйăх каннă хыççăн тепĕр тапхăр сипленмелле. Çапла – çулталăк тĕршшĕпе.

Чĕрĕ çĕр улми çини те усăллă: 20-30 грамран пуçласа майĕпен 100-150 грама çитермелле.

Эрĕм курăкĕн настойĕ те (аптекăра пур) аван: кунне 3 хут, апатчен 15 минут маларах, 12-шер тумлам ĕçмелле. 6 эрне сипленсен 4 эрне тăхтамалла, кайран каллех çĕнĕрен, çапла 3 тапхăр сипленмелле.

## СИППЕ КАЙТĂР

### Хырăмлăхпа вун ик пумăклă пыршă язвинчен

Çуршар кило теркăланă кишĕр, аш арманĕпе авăртнă аçтăрхан мăйăрĕ, пыл тата услам çу илĕр. Услам çăва пăспа ирĕлтерсе кишĕрпе хутăштарăр, унтан мăйăрпа пыл хушса лайăх пăтратăр. Кунне 3 хут, апатчен çур сехет маларах, пĕрер кашăк çимелле. Сывалса çитиччен сипленмелле.

### Хĕрарăмсен бальзамĕ

Фибромиома пуррисене çакăн пек бальзам туса ĕçме сĕнес килет. 3 л шыва 100-шер г шăлан çырли, хыр кăчки, мулкач курăкĕ (тысячелистник), 200 г суя ăвă кăмпин (чага) экстракчĕ, 5 г (2 чей кашăкĕ) эрĕм курăкĕ ямалла. 2 сехет тăрăлтарса лартмалла, унтан 2 сехете яхăн вĕретмелле, ăшă япалапа хупласа пĕр талăк лартмалла. Кайран сăрăхтармалла, 200 мл алоэ сĕткенĕ, 250 мл коньяк, 800 г пыл хушса хупмалла та тепĕр талăк кĕтмелле.

Пĕр эрне таран кунне 3 хут, апат умĕн 1 сехет маларах, пĕрер чей кашăкĕ ĕçмелле, малалла – пĕрер кашăк. Бальзама икĕ эрнерен кая мар, анчах виçĕ уйăхран ытла ĕçме юрамасть.

*Асăрхаттарни: халăх сĕнекен сывату меслечĕсемпе усă куриччен тухтăрпа канашласа пăхмалла.*

## ХŬТЛĔХ

### Вăтăр çул ĕçленĕ-и?

**? Эпир илтнĕ тăрăх – 2015 çулта ялта пурăнакансен пенсийĕ хăпармалла. Камсен хăпарать-ши? Ялти сем те тĕрлĕ ĕçре тăрăшаççĕ-çке. Калăпăр, фермăрисен укçи пысăкрах, бригадăрисен – сахал. Çав вăхăтрах бригадăра ĕçлекен пулмасан ферма выльăхĕ те тутă пулмĕччĕ.**

**Ĕмĕрĕпе колхозра ĕçленĕ эпир, укçине питĕ сахал илнĕ. Паллах, пенсийĕ те пĕчĕк. Кашни пусĕ шутра. Çавăнпа камсен пенсийĕ ўснине пĕлесчĕ.**

**СКВОРЦОВА, АЛЕКСЕЕВА, МАТВЕЕВА. Красноармейски районĕ.**

Хисеплĕ вулаканăмăрсем, сирĕн çырăвăра РФ Пенси фончĕн Чăваш Енри уйрăмне ярса патăмăр. Çакăн пек хурав илтĕмĕр:

– 2015 çулхи кăрлачăн 1-мĕшĕнчен Раççейре пенси страхлав тытăмĕнчи граждансен прависене тата пенси виçине шутласси çĕнĕлле йĕркелеме тытăнаççĕ. Улшăнусемпе çĕнĕлĕхсем кĕртекен федераци саккунĕсенчен пĕри – 2013 çулхи раштавăн 28-мĕшĕнче йышăннă «Страхлав пенсийĕсем çинчен» саккун. Унпа килĕшўллĕн пенси виçине шутланă чухне ĕç стажĕн тата официаллă ĕç укçин пĕлтерĕшĕ ўсет. Ĕçленĕ кашни çулшăн уйрăм пенси коэффициенчĕ палăртаççĕ. Ĕç укçи мĕн чухлĕ нумайрах – коэффициенчĕ çавăн чухлĕ пысăкрах.

Ял ĕçченĕсене страхлав пенсийĕ çумне **25 процент хушса тўлеме палăртнă. Ăна ял хуçалăхĕнче 30 çултан кая мар ĕçленисене, ялта пурăнакансене, хушса тўлесçĕ. Çак йĕрке 2016 çултан вăя кĕрĕ,** унччен Раççей правительстви çак ирĕкпе усă курма тивĕçлисен списокне çирĕплетет.

### Кĕнекепех меллĕччĕ

Çутăпа усă курнăшăн тўлемелли кĕнекене мĕншĕн пĕтерчĕç-ши? Питĕ меллĕччĕçке: çырма та, тўлеме те. Халĕ почта ещĕкне чиксе хăваракан хут таткине çухатасси ним те мар. Çулла çумăрпа йĕпенме, хĕлле çил-тăманпа тухса ўкме пултарать. Пĕччен пурăнакан ватă çын çав хут çинчен тепĕр чух аса та илмĕ. Почтальонсен те çав хутшăн кашни кил умне çитмелле. Вĕсем ахаль те пенси панă вăхăтра икĕ-виçĕ сумка тавар йăтса çўреççĕ.

Абонент кĕнеки чылай вăхăта çитетчĕ. Ку хут таткине вара ăçта чиксе хутăм-ши тесе пуç ватмалла.

**Н. ЛАРИОНОВА. Йĕпреç районĕ.**

## РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРŪСЕМ

### ПРОДАЮ

**2. АКЦИЯ! Блоки керамзитобетонные** 20х20х40 – 33 руб., 12х20х40 – 29 руб., 10х20х40 – 25 руб. Высокое кач-во. Доставка. Т. 89196543499.

**3. АКЦИЯ! Кольца колодезные** диам. 0,7 м, 1 м, 1,5 м. Д-ка манипулятором. Бурение. Т. 89196543499.

**4. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка. Без вых. **Т. 8-987-576-65-62.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х20х40 пропаренные, гидро-вибропрессованные заводские от производителя – недорого; **цемент, песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**7. Срубы для бани.** Доставка по ЧР. Т. 372874.

**14. Станки** для валяния валенок. Т.: 89278617589, 89373810585.

**15. Кирпич, брусчатку, кольца,** ОПГС, песок, КБ. Т. 89613393363.

**16. Сетку-рабицу** от произ-ля, черную, зеленую, оцинкованную – около 100 видов, сетку сварную, **столбы,** скобы, **проволоку,** калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 89379522211.

**19. Гравмассу, песок, щебень,** торф, кирп. бой. Т. 8-903-322-57-66.

**20. Пластиковые ОКНА.** Низкие цены. Найдете дешевле – уступим. Без. вых. Т. 89625989686.

**22. ОКНА пластиковые, железные ДВЕРИ.** Реально низкие цены. Гарантия. Т. 89871267170.

**23. Гравмассу,** песок, бой кирпича, **щебень.** Доставка. Тел. 89061355241.

**24. Грабли, косилки, сажалки,** копалки, окучники, опрыскиватели. Доставка. Т. 89278533596.

**33. Гравмассу, песок, керамзит,** щебень, торф. Доставка. Т. 89053465671.

**35. Блоки керамзитобетонные** вибропрессованные, пропаренные. Дешево. Т. 89373866629.

**43. Натяжные потолки** за 1 день. Т. 89373972442.

**45. Песок, гравмассу, щебень.** Д-ка. Т. 89196543499.

ВУЛАКАН ЫЙТНИПЕ

# Александр Магарин: «Хамăрсăр пуçне – кам?»

**Чăваш Ен наци телерадиокомпанийĕн çĕнĕ ертӳçипе Александр Магаринпа тĕл пулма редакцие килнĕ çыру хистерĕ:**

*"Эпир, республикăн кăнтăр районĕсенче пурăнакансем, чăваш наци телекуравне пăхаймастпăр. Хусан пирĕнтен виç çĕр çухрăмра, анчах унăн передачисене тытма пулать. Пирĕн ун пек тума май çук-ши вара?*

*Михаил Ванюшин.*

*Шăмăршă районĕ, Асанкасси ялĕ".*

**– Александр Николаевич, çыру авторне мĕн хуравланă пулăттăр?**

– Ялсенче пурăнакансем пирĕн передачăсене пăхасшăн пулнине пĕлетпĕр. Çакнашкал çырусем хамăр пата та килеççĕ, шăнкăравлакан та нумай. Чăваш кăларăмĕсене курассишĕн ятарласа Шупашкара, тăванĕсем патне çĕр касма килекенсем те пур. Тахçан пĕр-пĕрин патне телевизор курма кайнă евĕр. Хам илтнине, хам курнине калатăп.

Хальхи вăхăтра наци телекуравне Шупашкар, Çĕнĕ Шупашкар, Сĕнтĕрвăрри, Куславкка, Çĕрпӳ хулисенче, Кӳкеç, Тĕрлемес, Опытный поселокĕсенче пурăнакансем йышăнаççĕ. Çывăх вăхăтрах Канаш, Улатăр, Çĕмĕрле, Етĕрне хулисенче, Вăрнарпа Йĕпреç поселокĕсенче пăхма тытăнĕç. Ялсене вара хальлĕхе, тем пек тăрăшсан та ... çитеймĕпĕр.

**– Апла Асанкассисен ĕмĕчĕ пурнăçланаймĕ?**

– Ун пекех мар ĕнтĕ. Эпĕ унта паян-ыран çитейменни пирки калатăп. Интернет пуррисем пирĕн сайта (www.ntrk21.ru) кĕрсе пăхма пултараççĕ: çак вăхăтра пыракан программăсене те, унччен кăтартнисене те.

Пурăна киле мĕн пур телекурав цифра техники çине куçмалла. Эпир пĕрремĕш кунранах çĕнĕ меслетпе ĕçлетпĕр. Ку хăвăрт ĕçлеме тата технологи тĕлĕшпе пысăк пахалăхлă кăларăмсем тума май парать.

Наци телекуравне республикипех курайччăр тесен телехумсене спутник урлă салатмалла. Сирĕн редакцие килнĕ çыру авторĕ тутарсен кăларăмĕсене шăпах спутник турилккипе пăхать пулас. Эпир те Раççей шайĕпе тата унăн тулашĕнче ĕçлекен спутник телекуравĕн операторĕсемпе калаçусем пуçартăмăр, халĕ вĕсен сĕнĕвĕсене кĕтетпĕр. Анчах усăлăх ыйтăвĕ калама çук пысăк укçапа çыхăннă. Вăй çитерĕпĕр-ши? Майне тупсан хамăр тăрăхра çеç мар, республика тулашĕнче те пăхма пултарĕччĕç пире.

Шăмăршăсене мĕн калам? Хамăртан мĕн килнине пĕтĕмпех тăвăпăр. Тен унти операторсемпе калаçса татăлса хальлĕхе хамăрăн архиври кăларăмсене ярса парăпăр-и? Анчах вĕсене те паянхи кун кабель телевидение куракансем çеç пăхайĕç.

Ял çыннин пурнăçне анлăрах сăнлас килет. Çавăнпа вырăнти телестудисемпе тачă çыхăнса ĕçлесшĕн. Чылай районпа хулан хăйĕн телекуравĕ пур. Вĕсен хăш-пĕр кăларăмне мĕншĕн ыттисене те кăтартас мар?

**– Тутарсенни пек кунĕн-çĕрĕн тăван чĕлхепе калаçакан телекурав пулĕ-ши пирĕн?**

– Наци телекуравĕ тени чăнласах та хăватлă янăрать, анчах унта талăкĕпех чăвашла çеç калаçмалла тенине пĕлтермест ку. Ун пек тĕллев лартман та. Пирĕн республикăра тĕрлĕ наци çынни пурăнать. Вырăсла кăларăмсем те кирлĕ, вĕсемсĕр май та çук. Тутарсен те тутарла кăна янăрамасть. Хăйсен кăларăмĕсене икĕ чĕлхепе калăпласçĕ, ютран туянни те пур.

Хальхи вăхăтра эпир кунсерен 4-шар сехет кăтартмалăх передачăсем хатĕрлетпĕр. Вĕсенчен çурри чăвашла. Çителĕксĕр, паллах, анчах ĕçлетпĕр ку тĕлĕшпе.

**– Çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлакан. Улшăнусем пулаççех-тĕр.**

– Улшăнусем пулмаллах. Анчах вĕсем ырă улшăнусем пулĕç. Çĕнĕ кăларăмсем йĕркелес тетпĕр пулсан – çĕнĕ çынсем те кирлĕ. Калăпăр, пирĕн ачасем валли тăватă кăларăм. Виççĕшĕ вырăсла. "Илемпи урокĕсем" вара паянхи шăпăрлана йăлтах тивĕçтереççĕ тесе калаймăн. Хамăрăн куракансене пĕчĕкрен ӳстермесен кайран ăçтан пулччăр вĕсем.

Чăвашлăх тени – юрă-ташăра кăна мар. Вăл этем кун-çулĕнче те, хутшăнура та, килти хуçалăха тытса пынинче те палăрмалла.

Халĕ кашни кăларăма пахалăхĕ тĕлĕшĕнчен тишкеретпĕр. Картне ларса çитейменнисене лайăхлатмалла. Хăш-пĕр кăларăм хăйĕн куракканне пĕрремĕш кунранах тупать, тепри тупаймасан та пултарать. Пĕр евĕрлĕрех икĕ кăларăм пĕр тĕвве çыхăнса вăйлă телепередача пулса кайни те çук мар.

Чăваш халăхĕн хăйĕн уйрăмлăхĕ темелле-ши? Чăваш театрĕн спектаклĕсене вунăçирĕм-вăтăр çул каялла мĕнле ыйтнă – çавăн пекех ыйтаççĕ куракансем. Çакна шута илсе кашни уйăхра темиçе спектакль çырса илетпĕр, эфира кăларатпăр.

Çĕнĕ хыпарсене малашне кăнтăрла та кăтартмалла тăвасшăн. Хальхаççăн иртекен пулăмсене çийĕнчех çутатма май пур чухне мĕншĕн касчен кĕтетерес куракана? Иртнĕ çул çак тĕллевпе ятарласа чаплă хатĕр туянтăмăр. Шкул ачи кутамккине вырнаçакан вăл, анчах пĕлтерĕшĕпе унччен ятарлă автомобиле аран шăнăçакан капмар оборудованипе танах. Карас çыхăнăвĕ пур кирек хăш вырăнтан та нимĕнле пăралук мĕнсĕрех унта тӳрĕ эфира тухма пулать. Республикăна çитнĕ Олимп çулăмне те хайхи хатĕрпех кăтартнăччĕ.

**– Александр Николаевич, чăваш наци телерадиокомпанийĕн паян вăççĕ массăллă информаци хатĕрĕнчен тăрать. Ыттисем пирки те каласа хăварсамăр.**

– Чăваш наци радиовĕн сасси янăрама пуçланăранпа кăçал, ака уйăхĕнче, 5 çул çитет. Пур районта та йышăнма пултараççĕ ăна паян. Уйрăмах ял çыннисем, машинăпа çӳрекенсем юратса итлеççĕ. Уйăхсерен эфира 50 ытла программа тухать. Пĕлтĕр, раштав уйăхĕнчен, "Тăван радио" ĕçлеме пуçларĕ. Ăна Шупашкарпа Çĕнĕ Шупашкар хулисенче пурăнакансем итлеме пултараççĕ. Икĕ радиостанци те Интернетра тӳрремĕнех янăраççĕ.


С. Журавлев сăн ӳкерчĕкĕ

Эппин вĕсене тĕнчен кашни кĕтесĕнче итлеме пулать.

**– Чăваш Ен наци телерадиокомпанийĕн мĕнлерех пулмалла-ши?**

– Наци сăмаха çапла ăнланатăп: паха, шанчăклă, хăвăрт ĕçлекен телекуравпа радио. Тĕп вырăнта – халăх йăли-йĕркипе культури, чăваш çыннин пурнăçĕпе ĕçĕ-хĕлĕ. Пире хамăрсăр пуçне никам та чăвашла кăларăмсем туса памасть. Хамăр тăрăшмасан кам тăвĕ? Ку – пирĕн тивĕç.

**– Чăвашла передачăсем тума çынсем çитеççĕ-и-ха?**

– Кадр ыйтăвĕ çивĕч. Куракансем хапăлласа йышăннă кăларăмсене штатра тăман çынсем туса пыраççĕ. Калăпăр, "Çитмĕл те çиччĕ", "Çапла пултăр!", "Касчи тĕл пулу"... Ман шухăшпа – ку йĕркеллĕ пулăм. Кунашкал тĕслĕхсем Мускавра туха тăракан кăларăмсенче те тĕл пулаççĕ.

**– Ертӳçĕре виççĕмĕш эрне кăна ĕçлесен те телекуравшăн ют çын мар эсир. Чăваш патшалăх телерадиокомпанийĕнче çамрăксен кăларăмне ертсе пынине ас тăватăп. "Салам" ятлăччĕ вăл. Каярах, директор çумĕнче те ĕçлерĕр, унтан культура министерствинче, Кĕнеке палатинче... Пĕр сăмахпа каласан, телекуравран инçех тарман. Хăвăрăн юратнă кăларăм пур-и? Халĕ сирĕн пурне те юратмаллине пĕле тăркачах ыйтатăп-ха. Çавах та...**

– Çĕнĕ хыпарсем. Унта пурте пур. Пирĕн телеканал кирек епле пулсан та – информаци хатĕрĕ. Республика пурнăçне пур енлĕн, туллин çутатмалла.

Хальччен тунă ĕçе, унченхи ертӳçĕсене пĕрре те хурламастăп. Çав тери пысăк ĕç тунă вĕсем. Малашнехи тĕллевсем-и? Маларах асăнтăм ĕнтĕ, вырăнти студисемпе тачă çыхăнса ĕçлесшĕн. Чăваш наци конгресĕпе çумаçумăн ĕçлени те пăсмĕччĕ. Хăй вăхăтĕнче пуçра пулнă, анчах ниепле те пурнăçлама май килмен ялапасем патне тепĕр хут тавранасшăн. Калăпăр, ăс-хакăл вăййи, кил-çуртра тата хушма хуçалăхра пулăшакан передачăсем кирлĕ. Куллен усă куракан япаласене, чи çывăх туйăмсемпе пулăмсене те вырăсла калани чĕлхене кăкланăнах туйăнать. Аякри йăхташ мĕнлерех пурăнать-ха? Вĕсем çинчен каласа кăтартни те çукпа пĕрех... Çакнашкал палăртса хунисем тата та пур.

**– Ăнăçу сире, шухăшланисем пурнăça кĕрсе пыччăр.**

**Елена НИКОЛАЕВА.**

КĔСКЕН

**Совет Çарĕн чаçĕсене Афганистанран кăларнăранпа ыран 25 çул çитет. Чăваш Енрен Афган вăрçине 4,5 пин çын хутшăннă, вĕсенчен 115-ĕшĕ пуçне хунă, тăватташĕ хыпарсăр çухалнă.**

**Вĕренӳ министрĕ Владимир Иванов пĕлтернĕ тăрăх – республикăра юлашки 3 çулта шкул çулне çитменнисем валли 3870 вырăнлăх 23 садик тунă, юсанă, туяннă. Кăçал шкул çулне çитмен ачасем валли 2521 вырăнлăх 14 вĕренӳ учрежденийĕ хута яма палăртнă.**

**Пĕлтĕр республикăра кашни 1000 çын пуçне 14 ача çуралнă, 13,2 çын вилнĕ.**

## Саламлатпăр!



Нарăс уйăхĕн 15-мĕшĕнче Канаш районĕнчи Янкăлч ялĕнче пурăнакан **Юлия Даниловнăпа Михаил Аркадьевич КОНЯШКИНСЕМ** ылтăн туйне уявлаççĕ. 50 çул – вăрăм çул. Çакăн чухлĕ пурăнма пултарни пирĕншĕн, ачисемшĕн, пысăк телей. Эпир аннепе аттене, кукамайпа кукаçие, асаннепе асаттене, мăн кукамайпа мăн кукаçие сумлă çак кунпа чун-чĕререн саламлатпăр, сывлăх, телей, ăнăçу, килĕшӳ сунатпăр. Хаклă çыннăмăрсем! Савăнатпăр эсир килĕштерсе, шăкăл-шăкăл, çемье ăшшине упраса, йывăрлăхсене пĕрле çĕнтерсе пурăнма пултарнишĕн, пире вĕрентсе пынишĕн. Пĕр-пĕрне ăнланни, маттур, хастар, ĕçчен пулни пулăшса пырать пурнăçра. Халĕ те ватлăха парăнмасăр выльăх-чĕрлĕх, чăх-чĕп чылай усратăр. Пире, ачăрсене тата мăнукăрсене пулăшса пыратăр. Сирĕн умăрта çĕре çити пуç таятпăр. Тен, эпир сире кӳрентернĕ те пуль, сив сăмахпа чунăрсене ыраттарнă пуль, йывăр вăхăтра сирĕн пата çитейменшĕн касăру ыйтатпăр. Ылтăн туйпа сире, хаклă çыннăмăрсем! Изумруд, бриллиант туйсене те пĕрлех паллă тумалла пултăр.

**Саламлаканĕсем: ывăлĕпе кинĕ, 4 хĕрĕ, 4 кĕрӳшĕ, 10 мăнукĕ, кĕçĕн 2 кĕрӳшĕ, кĕçĕн 2 мăнукĕ, тăхлачисемпе хăтисем, тăванĕсем, кӳршисем.**

***



**Иван.** 40 çулта. Ялта пурăнатăп. Эрех ĕçместĕп, табак туртмастăп. Килĕм-çуртăм аван. Çемье çавăрса ача-пăчаллă пулас ĕмĕтпе пурăнатăп. Т. 8 917 655 45 13.

РЕКЛАМА ТАТА ПĔЛТЕРӲСЕМ

ПРОДАЮ

**47. Керамблоки** 20х20х40 от производителя. Т.: 8-903-389-90-38, 48-92-77.

**49. Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках – цены от производителя. Т. 8-905-344-79-32.

**59. Семена кормовой свеклы «ЛАДА»** высокой репродукции. Тел.: 8(8352) 73-39-11, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**60. СЕМЕНА** высокоурожайных **томатов, огурцов, перцев** и др. Тел.: (8352) 73-39-11, 75-80-34, 55-44-70, 8-961-346-38-34.

**66. Заборы кованые.** Т. 389587.

